Ял çыннине паян хумхантаракан ыйтусемпе калаçу пуçлатпăр

Çĕр-аннемĕр шăпине мĕнле татса памалла?

ЧР Президенчĕ 2009 çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе хисеп турĕ те рынок хутшăнăвĕсем пирĕн ума çĕр йĕркелĕвĕпе кăларса тăратнă нумай çĕнĕлĕхсене пирĕн шăпах кăçал татса пама тивет тесен те йăнăш пулас çук. Ку тĕлĕшпе ĕçсем пуçланнă ĕнтĕ.

Пурте пĕлетпĕр, кирек хăш патшалăхăн та тĕп никĕсĕ вăл çĕр пулса тăрать. Пирĕн çĕр-шывра çĕр Раççей Федерацийĕн тата унăн субъекчĕсен, муниципаллă йĕркелӳсен харпăрлăхĕнче шутланать. Çак пайлав паян çĕршывĕпех активлă пурнăçланса пырать. Пуриншĕн те паллă, çĕр участокĕсемпе вĕсем тĕлĕшпе харпăрлăх правин патшалăх регистрацине тусан çеç усă курма юрать. Патшалăх харпăрлăхне чикĕлемен çĕр участокĕсемпе муниципаллă районсен, хула округĕсен вырăнти самоуправлени органĕсем усă кураççĕ, енчен те вăл çĕрсем тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн автоçулсем çинчен калакан законодательствипе пăхса хăварман пулсан. Çапла вара çĕр лаптăкĕ туянас текенĕн малтан хăйĕн шухăшне район пуçлăхĕ ячĕпе ыйтса çырмалла. Ку ĕçе тĕрĕс туса ирттерсен, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе хут çине çырса килĕшӳ тумалла. Çакăн хыççăн çеç документсене паспорт копийĕпе пĕрле райадминистрацие пама юрать.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче çĕр участокĕсем тĕлĕшпе патшалăх акчĕсем валеçрĕç: çынсене хĕрлĕ тĕслĕ актсем, предприятисене – кăвак тĕслĕ. Вĕсен пĕр экземплярĕ çĕр кадастрĕн палатинче упранать. Патшалăх акчĕ юридици тĕлĕшĕпе Регистраци палатинче патшалăх реестрне çырнипе пĕрешкел вăйра шутланать. Çавăнпа та çĕр участокне сутас мар тĕллевлĕ çыннăн асăннă документран харпăрлăх правин свидетельствине тума Регистраци палатине çӳреме те кирлех мар. Патшалăх акчĕ ашшĕ-амăшĕнчен ачисене эткере куçать.

Енчен те эсир хăвăр харпăрлăхри çĕр участокне сутас тесе шутларăр пулсан, сирĕн патшалăх регистраци процедури витĕр тухмаллах пулать. Юридициллĕ вăйра тăракансен, Раççей Федерацийĕн Çĕр кодексĕн 20-мĕш статйин 1-мĕш пунктĕнче пăхнисемсĕр пуçне, патшалăх акчĕпе панă çĕр участокĕсене ялан усă курмалăх, тĕн организацийĕсен хăйсен ирĕкĕпе яланлăх усă курмалли право çине куçмалăх Раççей Федерацийĕн Çĕр кодексĕн 36-мĕш статйин правилисемпе 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен хатĕрлесе çитермелле. Куратпăр, вăхăт нумаях юлмасть. Ял хуçалăх предприятийĕсем хăйсем валли тата уйрăм çынсем хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелесе ĕçлеме илекен çĕре «Раççей Федерацийĕн Çĕр кодексне пурнăçа кĕртесси çинчен» Федераллă саккунпа илеççĕ. Харпăрлăха илекен çĕрсен хакĕ çав çĕрсен кадастр хакĕн 20 проценчĕпе танлашать.

Ял хуçалăх çĕрĕсем тĕлĕшпе арендăн чи кĕске вăхăчĕ саккунпа килĕшӳллĕн 3 çул. Аренда килĕшĕвĕ тума çĕр участокне виçсе кадастр учетне тăратни кирлĕ.

Пирĕн районти ытларах çĕр лаптăкĕсем çĕр пайĕсем шутланаççĕ. Вĕсене илме право пур çынсем 15 пин ытла. Питĕ шел, анчах çак категорири çĕрсем эффективлăхсăр ĕçлеççĕ. Кунта çĕр пайĕ илме право пурримасемпе çав çĕр çинче ĕçлес кăмăллисем хушшинче ăнланулăх çителĕксĕрри урă хурать.

Аренда килĕшĕвĕ тума çĕре арендăна параканăн малтан хăйĕн çĕр пайне регистрацилесе алла свидетельство илмелле. Çакăн хыççăн çеç вăл çĕр çинче ĕçлес текенне аренда килĕшĕвĕ тăвайрать. Çакна çынсем ăнланса илессе шанас килет.

Çĕр участокне уйăрса илнĕ чух пай хуçисем пĕр шухăшлă пулса пĕр-пĕр хире пĕрле виçтерсен çынсемшĕн перекетлĕрех те пулать. Кун пек хире арендăна панă чух та ытлашши ыйтусем сиксе тухмаççĕ.

Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи «Герой» хуçалăхра ырă пуçару пур. Кунта çĕр пайĕсен хуçисем аренда килĕшĕвне 10 çуллăха тăваççĕ. Вăл çĕрсене хуçалăх регистрацилесе парать. Кам çĕре арендăна пама ыйтса çырман – вĕсен çĕрĕ çинче хуçалăх та ĕçлемест.

Раççей патшалăхĕн политики, Чăваш Республикин Президенчĕн позицийĕ кашниншĕнех ăнланма çăмăл: кашни çĕр лаптăкĕн хуçи пулмалла, унăн юхăнса выртмалла мар – ĕçлемелле! Çакна шута илсех-тăр Чăваш Республикин Президенчĕ 2009 çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе йышăнчĕ. Малалла пăхса ĕçлесен, тĕнчери экономика кризисĕ ял хуçалăх таварĕ туса илекене импортлă продуктсене сирсе ывăтса хăйсен экономикине вăйлатма çул уçса памалла. Çапла пуласса шанас килет. Пирĕн хресчен туса илекен продукци çĕр-шыв экономикинче тивĕçлĕ вырăн çĕнсе илессе, импорт продуктсене аталанма çул хупасса кĕтетпĕр, çавна валли хресчене малалла пăхса ĕçлесе пурăнма çĕнĕ аталану çулĕсем хапха уçасса ĕненетпĕр.

А. ПЕТРОВ,
район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи.

Вылькăх тухтăрĕпе калаçатпăр

Урнин чирĕ пирки

Иртнĕ çулсенче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ ялсемпе хуласенче йытăсемпе кушаксене усрамалли правилăсене çирĕплетнипе килĕшӳллĕн пирĕн районта та ку тĕлĕшпе йышăну кун çути курчĕ. Çакă ăнсăртран мар. Мĕншĕн тесен шăпах кушаксемпе йытăсем – урнин чирне анлă саракан тата сармалли тĕп çăл куçсем. Таврара хĕл кунĕсем тăраççĕ. Урамсенче çапкаланса çӳрекен хуçасăр йытăсемпе кушаксем йышланни куç кĕрет. Шăпах вĕсем обществăшăн пысăк ыйту кăларса тăратаççĕ. Çакăн пирки Патшалăх ветеринари службипе Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕ асăрхаттарсах тăраççĕ. Хăрушлăх чăнах пысăк-и? Çакăнпа интересленсе эпир паян районти вылькăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин ветеринари лабораторийĕн заведующине Людмила Алексеевна БОЯРИНОВАНА калаçава чĕнтĕмĕр. Йăлтах туса çитеретпĕр-и-ха эпир урнин чирĕпе кĕрешсе? Мĕн пĕлмелле пирĕн унран асăрханма тата унпа кĕрешме?

– Людмила Алексеевна, юлашки çулсенче республикăра урнин чирне палăртнă кашни тĕслĕхре майлах тилĕсем тĕл пулаççĕ. Инфекци саракан-нисем шăпах вĕсем мар-и?

– Сирĕн ыйтăва пĕр енлĕ хуравлама çук. Чăнах та, урнин чирĕн вирусĕ упранакан тĕп çăл куç вăл пирĕн тăрăхри тилĕсем. Чăваш Республикинче иртнĕ çулсенче урнин чирне регистрацилене тĕслĕхсенчен ытларахăшĕнче чир тилĕсенче пулни палăрать. Йытăсемпе кушаксем урнин чирĕпе чылай чирленине те палăртнă. Çак хăрушă чир иртнĕ çулсенче пирĕн районта та пулнăччĕха. Вăл тĕслĕхсенче эпир çийĕнчех тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттертĕмĕр: вилнĕ тилĕсене анализ тума республикăри ветеринари лабораторине ăсатрăмăр, йытăсене юн кăлармасăр вĕлернĕ хыççăн çунтарса ятăмăр, килти ытти выльăхсене куллен пăхса тăрассине йĕркелерĕмĕр, тилĕ пулнă тата йытă унпа çапăçнă вырăнсене дезинфекцилерĕмĕр, тилĕне е йытăна тытнă çынсем пирки медицина ĕçченĕсене пĕлтертĕмĕр.

Урнин чирĕпе çут çанталăкра тĕрлĕ чĕр чунсем чирлеççĕ. Вăхăтăн-вăхăтăн çак чĕр чунсем урнин чирĕпе нумайăн чирлеме пуçлаççĕ. Сăмах май халĕ шăпах çавнашкал тапхăр пырать. Апла пулсан асăрханулăха ўстермелле кăна.

– Мĕнпе çавнашкалах хăрушă-ха урнин чирĕ?

– Урнин чирĕ вăл – хăрушă инфекци. Унран чирĕн инкубаци тапхăрĕнче çеç çăлăнса юлма пулать. Чир аталанма пуçласан вара... Республикăра юлашки 12 çулта чĕр чунсем хушшинче урнин чирĕ сарăлас хăрушлăх пĕртте чакмасть-ха. Унпа çынсем чирлес хăрушлăх та пĕчĕк мар. Каламалла, пирĕн республикăра çынсем хушшинче урнин чирне тупса палăртни пулман-ха, анчах çакă лăпланмалли сăлтав мар. 2000 çулсен пуçламăшĕнченпе çĕр-шывра урнин чирĕн эпизоотийĕ сарăлас юхăм палăрма пуçларĕ. Çакăнта тилĕсем малти вырăнта тăраççĕ. Кунпа пĕрлех ялсенчи хуçасăр йытă-кушак хăрушлăха вăйлатать çеç. Вĕсем ял çыннисен выльăхчĕрлĕхпе чăх-чĕпне тытса сиен кӳнипе пĕрлех хăрушă чир саракансем те пулса тăчĕç. Урнин чирĕпе чирлĕ йытă çыртсан, çын çийĕнчех тивĕçлĕ медицина пулăшăвĕ илмесен, çак чиртен сывалма çук. Çакна шута илсе вырăнсенчи выльăх тухтăрĕсем йытăсемпе кушаксене урнин чирĕнчен профилактика прививкисем тăваççĕ. Акă иртнĕ çул районти ветеринарсем 4652 йытта урнин чирĕнчен вакцинăларĕç. Çуркуннепе кĕркунне тискер чĕр чунсен шăтăкĕсем патне пиншер доза вакцина хурса тухрăмăр. Çулталăк хушшинче хуçасăр йытăсемпе кĕрешме 20 бригада йĕркелесе 563 хуçасăр йытăна, 117 кушака тытрĕç. Çакна валли «çывратакан» вĕçекен дротиксем 2050 штук илсе килнĕ. Анчах çакă ялсенчи пур йытă-кушак та профилактика мероприятийĕсене лекнине пĕлтермест. Эпизооти ларутăрăвĕ çивĕччине шута илсе кăçал обществăлла секторти сумалли ĕнесен кĕтĕвне 100 проценчĕпех урнин чирĕнчен вакцинăлама пăхнă. Халăха ку чир хăрушлăхĕпе паллаштарассине мала кăларнă.

– Çак чирпе кĕрешсе мĕнле мероприятисем туса ирттеретĕр-ха?

– Ыйтăвĕ кăткăс, хуравлама та ансат мар. Ял тăрăхĕсенче январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 5314 йытăпа 8397 кушака учета илтĕмĕр. Çак кунсенче вĕсене урнин чирĕнчен вакцинăлас ĕçе кӳлĕнтĕмĕр. Ку вăхăтчен эпир ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе хуçасăр йытă-кушаксене вĕçекен дротиксемпе тытса «çывратса ярас» ĕçе вăйлатассине тата ăна тивĕçлĕ шайра ирттерессине пăхса тухрăмăр. Хуçасăр йытăсене тытма çывăх вăхăтрах пур ял тăрăхĕсенче те ятарлă бригадăсем йĕркелемелле. Çак ĕç валли ял тăрăхĕсенче çителĕклĕ чухлех «çывратса ямалли» эмелпе «авăрланă» вĕçекен дротиксем пур. Халĕ калани çумне çакна асăрхаттарса хушас килет. Ялсене тилĕ пырса кĕнĕ е хуçасăр йытă çыртнă тĕслĕхсем пулсан, кун пирки çийĕнчех выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцие пĕлтермелле. Пирĕн телефонсем: 2-18-62, 2-18-46.

– Мĕн пĕлмелле-ха ялта йытă-кушак усраканăн?

– Тĕрĕс ыйту. Депутатсен районти Пухăвĕн йышăнăвĕпе тăватă çул каяллах район территорийĕнче йытă-кушак усрамалли правилăсене çирĕплетсе хăварнă. Унпа килĕшӳллĕн йытă-кушак хуçисен хăйсен харпăрлăхĕнчи чĕр чунсене Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцире е унăн структура подразделенийĕсенче регистрацилемелле. Вĕсене вăхăтра чирсенчен вакцинăламалла, йытăсене сăнчăрта тытмалла, уçăлма илсе тухнă чухне вĕсем çинче йĕвен пулмалла тата вĕсен ирĕклĕ чупса çӳремелле мар, йытă çыртнă тĕслĕхсем пирки çийĕнчех çывăхри ветучреждение пĕлтермелле.

Урнин чирĕнчен çителĕклĕ хӳтĕленме пĕрлехи тимлĕхе çӳллĕ шайра тытни пулăшать.

А. БЕЛОВ калаçнă.

Кĕске хыпарсем

Экологи тата эпир

Юлашки çулсенче тĕнчери пур çынна та хумхантаракан ыйтусем шутне экологи те кĕчĕ. Çакă аслă ăрури çынсемпе пĕрлех пире те, шкулта вĕренекенсене, хумхантармасăр тăма пултаймасть.

Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта экологи ыйтăвĕ çивĕч тăнине вĕрентекенсемпе пĕрле вĕренекенсем те аван ăнланаççĕ. Çак ыйту пуçтарчĕ те иртнĕ кунсенче 5-мĕшпе 6-мĕш классенче вĕренекенсене ял библиотекине.

Библиотекăра вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Светлана Николаевна Никитина йĕркеленипе тата ертсе пынипе «Экологи тата эпир» викторина иртрĕ. Икĕ класс икĕ командăна пайланса пĕлӳ шайне кăтартрĕ. Пиллĕкмĕшсен команди «Çут çанталăк», ултăмĕшсен – «Этем» ятлă пулчĕç. Çĕнтерӳ тĕллевĕллĕ командăсем хушшинче конкурссем хастар иртрĕç. «Ыйту – хурав», экологи çинчен сăвăсемпе çут çанталăк илемне кăтартса çырнă юрăсем, тупмалли юмахсем т. ыт. те. Чылай вăхăта тăсăлчĕ савăнăçлă конкурс-викторина. Кашниншĕнех вăл çĕнĕ пĕлӳсен çăл куçĕ пулчĕ. Пĕтĕмĕшле ăмăртура «Çут çанталăк» команда хастартарах пулчĕ. «Этем» команда та уйрăм конкурссенче пысăк ăсталăх кăтартрĕ. Пĕтĕмлетсе каласан, туслăх çĕнтерчĕ.

Жюри членĕсем ял библиотекарĕ В. Конузина тата чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен Л. Никитина пулчĕç. Ачасен тăрăшулăхне вĕсем тĕрĕс хак пачĕç. Çакнашкал викторинăсем татах пуласса эпир шанатпăр.

Эльвира ИВАНОВА,
5-мĕш класра вĕренекен.

Района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ май

Малашлăха пăхса пĕр вăйпа ĕçлеттĕмĕр

Районăмăр çуралнăранпа 65 çул çитнине тата çак тапхăрта вăл аталану шайĕпе малалла кайтăр тесе хамăр мĕн тунине пăхатăп та иртнĕ çулсемшĕн пит хĕрелмест.

Район аталанăвĕшĕн тимлемелли питех те нумайччĕ вăл çулсенче. Ĕç дисциплини çине пысăк тимлĕх уйăраттăмăр. Техника юсавлă ĕçлени, хирте çухатусем тумманни, ўстернĕ тыр-пула пĕтĕмпех пуçтарса кĕртни, ял хуçалăх çĕрĕсем пушă выртманни т. ыт. те. Кашни ответлă ĕçченех тупăннă çитменлĕхсемшĕн хытă айăпланă. Çакна курса-тăрса халăх та тăрăшуллăрах та тирпейлĕрех ĕçлетчĕ. Кунашкал лару-тăрура чылай яваплă ĕçсенче вăй хума тиврĕ, анчах район аталанăвĕпе унăн пуласлăхĕ асран каймастчĕ. Иртнĕ ĕмĕрти 60-мĕш çулсем пуçламăшĕнче пĕр хушă Муркашри «Ял хуçалăх техники» предприятире Александр Ильич Кушковпа ĕçленине те ĕç ĕмĕрĕн лайăх вăхăчĕ тесе аса илетĕп. Çак ăста специалистран, пултаруллă ертӳçĕрен çĕннине те ыррине кăна кĕтеттĕмĕр. Район аталанăвне те пысăк тӳпе хыврĕ вăл. Çирĕп ыйтатчĕ, тĕрĕслĕхшĕн çунатчĕ, ĕçлекенсен ыйтăвĕсене иккĕмĕш вырăна хăвармастчĕ. Коллектив ĕçре те пĕр çын пек вăй хуратчĕ, канура та пĕрлеччĕ, уявра та халăхран уйăлмастчĕ. Асăннă предприяти паян та рынок хутшăнăвĕсенче çухалса каймасса шанатăп. Районăн черетлĕ юбилейĕсемччен унăн утăмĕсем те тĕреклĕленччĕр çеç.

Тавах пирĕн ĕçсене малалла тăсакансене.

Г. МАРТЫНОВ.

Муркаш сали.

Хушса калани: 1951 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕнче машинăпа трактор станцийĕн ячĕпе уçăлнă çĕнĕлĕх районта вăй илсех пынă. Асăннă предприяти юлашки 15 çул хушшинче – «Моргаушскавтотехсервис» уçă акционерлă общество. 1972-78 çулсенче ăна ĕçри ăнăçусемшĕн икĕ хутчен СССР Министрсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе наградăланă, виçĕ хутчен – РСФСР Министрсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе.

Çемье архивĕнчи сăн ўкерчĕкре: Георгий Арсентьевич Мартынов (сăн ўкерчĕкре сулахайра) А. Кушков (сылтăмри), предприяти инженерĕ В. Алексеев (варринче ялав йăтса пырать) 1972 çулта предприяти ĕçченĕсемпе Çуркуннепе Ĕç уявне паллă тума каяççĕ.